**«Вĕрентӳ» наци проекчĕ**

# Тăван çĕршыва юратасси шкултан пуçланать

Тăван çĕршыв вăл – тăван ял, атте-анне килĕ, юратнă шкул. Çак сăмахсемпе чи ăшă та ачаш туйăмсем çуралаççĕ. Тăван çĕршывран хакли мĕн пур-ши? Пирĕн ачалăх, çамрăклăх тăван кĕтесре, юратнă шкулта иртет.

Эпир Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренетпĕр. 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче пирĕн шкул 125 çул тултарчĕ. Çак юбилея халалласа шкулта пысăк уяв пулса иртрĕ. Чăваш Республикин пур кĕтесĕнчен те хăнасем килсе çитрĕç.

Мăн Сĕнтĕр салине кĕрсенех пирĕн шкулăн виçĕ хутлă çурчĕ хăйĕн ытамне чĕнет. Çуллахи вăхăтра ытарма çук илĕртӳллĕ чечексен клумбисем хăйсен илемлĕхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Хĕллехи вăхăтра вара шкулта уроксем кăна мар, класс тулашĕнчи ĕçсем нумай иртеççĕ. Уроксем вĕçленсен те шкулта ĕç вĕрет: шкул ачисем проектсемпе презентацисем хатĕрлеççĕ, тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ, редколлеги членĕсем «Шкул вăхăчĕ» ятлă хаçат кăлараççĕ. Хореографи кружокне çӳрекенсем çĕнĕрен те çĕнĕ ташă хатĕрлеççĕ, костюмĕсене хăйсемех çĕлеççĕ. «Çамрăк техниксен» станцинче 24 кружок ĕçлет. Ӳнер шкулне те ачасем ӳкерме тата тăмран тĕрлĕ кĕлеткесем ăсталама хаваспах çӳреççĕ.

Пирĕн шкулта икĕ музей: пĕри – историпе этнографи музейĕ, тепри – «Çар мухтавĕ» музей.

Историпе этнографи музейĕ 1997 çулта уçăлнă, вăл шкул çурчĕн пĕр кабинетĕнче пулнă. 2007 çулта çак музей «Çамрăк техниксен» станцине куçрĕ. Пысăк та çутă пӳлĕмри музея çĕнĕ экспонатсемпе пуянлатнă.

Чăваш чĕлхипе литература учителĕ В.В. Сапожникова экскурсие килекенсене яланах хавас, вăл ертсе пынипе музей пӳлĕмĕ кашни çул пуянланса пырать.

Ӳнер шкулĕ çумĕнче М.Шуйцев ячĕпе хисепленекен клуб пур, унта шкул ачисем тренажерсемпе усă курса мышцăсене аталантараççĕ, вăйвиçеççĕ. 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче çак клубра «Çар мухтавĕ» музей уçăлчĕ.

«Çар мухтавĕн» музейĕ питĕ пуян. Унти экспонатсемпе историпе ОБЖ учителĕ И.В. Семенов вăрçă пынă вырăнтан, Смоленск облаçĕнчен, ачасемпе экспедицие кайсан тупса килнĕ: тăхлан пульăсемпе снарядсем, штык вĕçĕсемпе минăсем, гранатăсем, пулемет лентисемпе фляжкăсем. Тăван çĕршывăн паттăрĕсене халалланă стендсем те чуна хумхантараççĕ.

Нарăс уйăхĕнче кашни шкулта çарпа патриотизм вăййисем пыраççĕ. Пирĕн шкулта та ку йăлана кĕнĕ ĕнтĕ, çак вăййăсем кăçалхи çул кăрлачăн 18-мĕшĕнче пуçланчĕç. 6-11 классенче вĕренекенсем кашни конкурса тимлĕ хатĕрленеççĕ, мала тухма тăрăшаççĕ, классем хушшинче пĕрремĕш вырăншăн ăмăрту пырать. Ертсе пыракансем кашни конкурса интереслĕ irттерме тăрăшаççĕ. Тен çавăнпах шкул ачисем уроксем хыççăн юр айĕнче «минăсем» шыраççĕ, автоматран персе нумайрах балл çĕнсе илме тăрăшаççĕ, йĕлме йĕлтĕр çине тăрса дистанцине тухаççĕ, топографи картти тăрăх паллăсене тупаççĕ, тинĕс тĕввисене çыхма вĕренеççĕ тата ыт.те. Пурĕ 15 конкурс.

Фойере стена çинче плакат çакăнса тăрать, кашни конкурс хыççăн çав плакат çине конкурс итогĕсене паллă тăваççĕ, шкул ачисем кашни класăн вырăнĕсене пĕлсех тăраççĕ.

Ăнсăртран мар пирĕн шкулти команда районта irттерекен «Зарница» вăйăра пĕрремĕш вырăна тухнă, республикăра вара иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Пирĕн шкулта вĕренме питĕ интереслĕ, кунта тарăн пĕлӳ илме те, тĕрлĕ енлĕ аталанма та май пур. Пире пултаруллă учительсем вĕрентеççĕ. Эпир чунтан савăнатпăр Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕреннишĕн.

**Снежана МОРОЗОВА, Люда БЫЧКОВА, Лена ПОДИЛКИНА.**

**Шкулсенчен хыпарлаççĕ**

# Хаваслă та савăнăçлă хĕл кунĕсем

Хаяр сивĕ хĕл кунĕсем хыçа юлма пуçларĕç ĕнтĕ. Акă нарăс уйăхĕ те вĕçленсе пырать. Ку уйăха хĕлĕн «кĕçĕн ачи» темелле. Шăпах çак уйăхра йăлана кĕнĕ йĕркепе irттереççĕ çар вăййине «Зарницăна». Ку ачасемшĕн те питĕ усăллă. Вĕсен сывлăха çирĕплетмелле. Пĕр кун усă сывлăшра пулни те мĕнле паха. Вăхăчĕ те ĕлĕкхи мар. Пурнăç кунран-кунах малалла шăвать. Çĕнĕлле пурăнма хăнăхса пыратпăр. Çырма-çатрасенче йĕлтĕр йĕрĕсене те сахал куратпăр. Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта эпир аптăрасах каймастпăр-ха ку енчен. Шкул директорĕ Олег Александрович, вăлах физкультура учителĕ те, йĕлтĕр йĕрне çухалма памасть. Ун хыççăн вара ачасем...

Ытармалла мар илемлĕ пирĕн тăван енĕн çĕрĕсем. Нарăс уйăхĕн 1-мĕш кунĕнче çакна пире ытларах асăрхама тӳр килчĕ. Шкултан инçех мар вырнаçнă Чулкаç çырми тата шкул ачисем лартса ӳстернĕ çырмари йывăçсем ачасен хаваслă сассипе тулса ларчĕç. Класс ертӳçисем, вожатăй маларах туса панă планпа усă курса, ачасене ĕçсем парса тухрĕç.

Ачасем асаттесемпе асаннесен тĕплĕн пуçтарса хунă хуранĕсене те шкула илсе килчĕç.

Ку «Зарница» вăйăран никам та айккинче тăрса юлмарĕ: ачасем, учительсем, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем, шкул таврашĕнче ĕçлекенсем пурте тенĕ пекех. Мĕнле кăна вăйă вылямарĕç пулĕ ачасем: йĕлтĕрпе те чупрĕç, çунашкапа та тупăшрĕç, медицина пулăшăвĕ те парса пăхрĕç, тăван енпе Тăван çĕршыв историйĕ çинчен ыйтусем çине хуравсем пачĕç, канат туртса та тупăшрĕç. Питĕ килĕшрĕ ачасене кунта.



**В. АНТОНОВА,**
**Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул.**
**Сăн ӳкерчĕкре: хуран яшки питĕ тутлă.**

**Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ**

# Кашни ялăн хăйĕн шăпи

Эпир Ярославка ял тăрăхĕнче пурăнатпăр. Нискасси шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренетпĕр. Пирĕн ял тăрăхне тăхăр ял кĕрет. Ялсем çут çанталăкăн питĕ хитре вырăнĕнче вырнаçнă, йĕри-тавра вăрмансем, кӳлĕсем пур. Шкулта вĕреннĕ вăхăтра эпир тĕрлĕ конкурссене хутшăнатпăр. Кашни çулах «Я – гражданин России» конкурса хутшăнатпăр, тĕрлĕ тĕпчев ĕçĕсем irттерсе проектсем çыратпăр. Кăçал Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ, çавăнпа та эпир кăçалхи тĕпчев ĕçне ял тăрăхĕнче вырнаçнă ялсем çинчен çырас терĕмĕр. Пирĕн ял тăрăхĕнче миçе çын пурăннине, миçе ача çуралнине пĕлес килчĕ, мĕншĕн тесен Раççей шайĕнче те çуралакансен йышĕ ӳссех пырать. Ыйтусем çине хурав тупас тесе, эпир ял тăрăхĕн администрацине, пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче ĕçлекен тухтăрсем патне çитсе килтĕмĕр.

Хамăр ыйтусем çине тупнă хуравсем пире питĕ тĕлĕнтерсе ячĕç. Пирĕн Ярославка ял тăрăхĕнче пурĕ 792 хуçалăх вырнаçнă, анчах та 158 хуçалăхра вут сӳннĕ, вĕсем пушă лараççĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче 50 ача çуралнă пулсан, пурнăçран уйрăлакансен йышĕ 108 çынна çитнĕ. Вĕсен хушшинче 41 çын вара хăйсем ку тĕнчерен васкаса уйрăлма шут тытнă: хăйсем çине алă хунипе тата эрех-сăмакуна пурнăçран та ытларах кăмăлланипе. Çак инкеке пулах хуçалăхсем пушансах пыраççĕ. Малалла та çак ӳсĕмпех пырсан, пирĕн ялсен пуласлăхĕ пур-ши? Ялсенче ĕç вырăнĕсем сахаллине пула çамрăксем ялсенчен тухса каяççĕ, вăй питти арçынсем çемйисене хăварса урăх регионсене ĕçлеме каяççĕ. Ачасем те ашшĕсен ăшшине çителĕклĕ илеймеççĕ.

Кун пек ӳкерчĕк пирĕн Ярославка ял тăрăхĕнче çеç мар, ытти ялсенче те тĕл пулать. Çавăнпа та пирĕн ялсен шăпи – пирĕн алăра. Вĕсем çĕр çинчен ан çухалччăр тесен, пирĕн пурин те тăрăшмалла, ĕç вырăнĕсем нумайрах туса памалла, ялсенче эрех-сăмакун сутакансене чармалла. Такам килсе туса парасса кĕтме кирлĕ мар, хамăр çине ытларах шанмалла, вара ялсем те аталансах пырĕç.

**Л. МОСОЛОВА, С. МУРАЙКИНА,**
**Нискасси шкулĕнчи 8-мĕш класра вĕренекенсем.**

# Çемье çулĕ – ырă çул

Кăçалхи çул Çемье çулĕ тата Ырă ĕçсен çулĕ пулнине шута илсе Москакассинчи Культура çуртĕнче тĕрлĕрен уявсем туса irттереççĕ. Вĕсенчен пĕри – «Çамрăк çемье» клубĕ. Февралĕн 17-мĕшĕнче шăпах çамрăк мăшăрсемпе Культура çуртĕнче тĕл пулу касĕ irттерчĕç. Чĕннĕ вăхăтра 6 мăшăр пуçтарăнчĕ (чĕнессе 30 мăшăр ытла чĕннĕччĕ). Малтанах мăшăрсемпе Н.А. Миронова психолог калаçрĕ. Çакăнпа мăшăрсем кăмăллă юлчĕç. Г.Г. Быкова мăшăрсемпе тĕрлĕрен конкурсвăйăсем irттерчĕ. Чăваш эстрада юрăçисем К. Голубева, И. Кораблева хăйсен илемлĕ юррисемпе пурин кăмăлне те çĕклерĕç. Çĕнтерӳçĕ-мăшăр вара тин çеç мăшăрланнă Ларисăпа Димитрий Павловсен çемйи пулчĕ. Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи çак мăшăра парне парса чысларĕ. Çавра сĕтел йĕри-тавра çамрăк мăшăрсем хăйсем хатĕрленĕ тутлă апат-çимĕçпе, вĕри чейпе сăйланчĕç. Çакăн пек тĕл пулусене кварталта пĕр хутчен irттерме сĕнсе хăварчĕç.

Çак уява йĕркелекенсене пысăк тав сăмахĕ каласа хăварчĕç.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

## Тухтăрсене тав тăватăп

Эпĕ сасартăк чирлесе ӳкрĕм. Больницăна каймалла пулчĕ. Унта мана Нина Артемьевна Лобачева акушер-гинеколог йышăнчĕ, чире часах тупса палăртрĕ, сипленнĕ хыççăн операци тăвассине пĕлтерчĕ. Операци ăнăçлă irттернĕшĕн Нина Артемьевна Лобачева акушер-гинеколога, Сергей Михайлович Васильев хирурга, Светлана Григорьевна Алексеева операци сестрине, Иван Алексеевич Воробьев çывăрттарса яракана, Светлана Васильевна Куликова тата Вера Ивановна Гордеева сестрасене, ытти мĕн пур врачсемпе хирургсене, сестрасемпе санитаркăсене темиçе тĕрлĕ чиртен сыватса ура çине тăратнăшăн пĕтĕм чĕререн тав сăмахĕ калатăп. Шурă халатлисене çывхарса килекен Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламласа вăрăм кун-çул, телей сунатăп.

**З. ОШМАНОВА.**

Хорнуй ялĕ.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:07 05 05:0101, местоположение: участок находится примерно в 240 м по направлению на восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, д. 7, площадью 6490 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Сурăхсем тата такасем туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57.**

**ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные 6-метровые 50х120, 50х150, 50х200; брусья 100х100, 100х150, 150х150, цемент, шифер, рубероид 15 м. Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58.** 5-6.

**Сакăр уйăхри хура тĕслĕ тынашки сутатпăр.**
**Тел.: 8-903-346-07-16.**

**ОАО «Моргаушский молочный завод», расположенное по адресу: с. Моргауши, ул. Чапаева, д. 65, объявляет прием на постоянную работу работников, имеющих соответствующую квалификацию: водителя грузового автомобиля. За справками обращаться к руководителю предприятия или в отдел кадров лично или по телефонам: 2-16-41, 2-24-07.**

**Участник долевой собственности Ильин Алексей Юльевич, 10.06.1969 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Победы, д. 1, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СПК «Новая Юнга» расположенного в поле № 6, полевой севооборот № 4 площадью 2,76 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Юнгинского сельского поселения.**
**2. Ильину Алексею Юльевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Победы, д. 1.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участник долевой собственности Бутырнов Николай Николаевич, 07.10.1958 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 79, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СПК «Новая Юнга» расположенного в поле № 6, полевой севооборот № 4 площадью 4,14 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Юнгинского сельского поселения.**
**2. Представителю собственника Ильину Алексею Юльевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Победы, д. 1.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участник долевой собственности Ганюшкин Владимир Михайлович, 07.07.1950 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 70, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СПК «Новая Юнга» расположенного в поле № 6, полевой севооборот № 4 площадью 1,38 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Юнгинского сельского поселения.**
**2. Представителю собственника Ильину Алексею Юльевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Победы, д. 1.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Волкова Галина Федоровна, 07.08.1956 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Вурманкасы, ул. Сурина, д. 46, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования ООО «Волга» расположенного в поле № 1 общей площадью 1,56 га, в том числе 1,34 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Волковой Галине Федоровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Вурманкасы, ул. Сурина, д. 46.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Столярова Вера Ильинична, 14.06.1956 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ушакова, д. 66, кв. 3, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СХПК «Хлебороб» расположенного в поле № 2 общей площадью 1,34 га, в том числе 1,24 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Столяровой Вере Ильиничне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ушакова, д. 66, кв. 3.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участник долевой собственности Трофимов Владимир Дмитриевич, 09.03.1944 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 39, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СХПК «Хлебороб» расположенного в поле № 11 общей площадью 1,34 га, в том числе 1,24 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Трофимову Владимиру Дмитриевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 39.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Трофимова Зоя Васильевна, 16.03.1951 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 39, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СХПК «Хлебороб» расположенного в поле № 11 общей площадью 1,34 га, в том числе 1,24 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Трофимовой Зое Васильевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, ул. Садовая, д. 39.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Пигенешева Анна Ивановна, 16.11.1918 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тренькино, ул. Новая, д. 1, кв. 3, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования ООО «Волга» расположенного в поле № 1 общей площадью 1,56 га, в том числе 1,34 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Пигенешевой Анне Ивановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тренькино, ул. Новая, д. 1, кв. 3.**
**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**



**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Белов А.П.**
**Номер подписан 26.02.2008 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3633.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.